# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

79 (8547) № ✻ Юнкун, 2017 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Октябрĕн 20-мĕшĕ – Тыр-пул уявĕ

**МУРКАШ РАЙОНĔНЧИ АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленность ĕçченĕн кунне халалласа районта иртекен Тыр-пул уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр!

Çак уяв хăйсен ырми-канми ĕçĕпе обществăна пуринчен те ытларах кирлипе – апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăракан мĕнпур çынна пĕрлештерет.

Пирĕн хресченсен ĕçченлĕхне тата тăрăшулăхне пула халăх лайăх пахалăхлă тата экологи тĕлĕшĕнчен таса шутланакан апат-çимĕçпе çителĕклĕн усă курать.

Çĕр ĕç отраслĕнчи патшалăх политики мĕнпур формăллă хуçалăхсене пулăшассине, ĕç тухăçлăхне ӳстерессине, тăкаксене чакарассине, ял хуçалăх продукцине тарăннăн тирпейлес ĕçе аталантарассине тĕпе хурать. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене патшалăх кӳрекен пулăшу калăпăшĕ палăрмаллах ӳсни агропромышленность комплексне лайăх çитĕнӳсем тума май парать.

Мĕнпур хуçалăхра тухăç валли акса ӳстерекен ял хуçалăх культурисен лаптăкĕ çулсерен ӳссе пырать, кăçал 15,9 пин гектара çитрĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ, 34,9 пин тонна тырă туса илнĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи кăтартуран 5,5 пин тонна чухлĕ ытларах.

Çĕр улми пухса кĕртес ĕçе те вĕçленĕ, ял хуçалăх организацийĕсенче тата хресченпе фермер хуçалăхĕсенче ăна пĕтĕмпе 5,6 пин тонна чухлĕ пуçтарса илнĕ. Гектар пуçне тивекен тухăç 157,8 центнерпа танлашнă.

Суту-илӳ организацийĕсен сентрисем çинче вырăнти продукци ассортиментĕ анлăланать тата унăн тӳпи ӳсет.

Муркаш районĕнчи çĕр ĕçченĕсене тăван çĕре чунтан юратса тăвакан пархатарлă ĕçĕшĕн чунтан тав тăватпăр. Хăйсен ĕçченлĕхĕпе, çирĕплĕхĕпе тата юратнă ĕçе парăннипе ырă тĕслĕх пулса тăракан ветерансене уйрăммăн палăртса тав сăмахĕ калатпăр.

Пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми ырă шанăç, Муркаш район ырлăхĕшĕн тăвакан пархатарлă ĕçре çитĕнӳсем тата телей сунатпăр!

**Муркаш район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ И. НИКОЛАЕВ.**

**Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Йыхрав

## Тыр-пул уявне чĕнетпĕр

Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ ятпа районта Тыр-пул уявне ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Кăçал ăна çитес эрнекун – октябрĕн 20-мĕшĕнче – паллă тăватпăр.

Уяв программи пуян та тĕрлĕ енлĕ. Малтанах "Кĕр пуянлăхĕ" выставка-ярмăркка уçăлать. Кунта хуçалăхсен ĕçченĕсемпе фермерсем, ял çыннисем туса илнĕ тĕрлĕ пахча çимĕç, улма-çырла, аш-какай туянма май пулать.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем тутлă апат-çимĕç сĕнеççĕ.

Хастар çамрăксем те тунсăхламаççĕ. Вĕсем мини-футболла выляса, пăт пуканĕ çĕклесе мала тухассишĕн ăмăртаççĕ.

Шкул ачисем ĕç пĕрлешĕвĕсен слетне пуçтарăнаççĕ. Ача-пăча пултарулăх выставкине хăйсен ĕçĕсемпе паллаштараççĕ. Юрă-ташăпа савăнтараççĕ.

Район ертӳçисем И. Николаевпа Р. Тимофеев ял çыннисене уявпа саламлаççĕ, ĕçре палăрнисене чыслаççĕ. Килнĕ хăнасем муркашсене ăнăçусем сунаççĕ.

Уяв, паллах, юрă-кĕвĕсĕр пулас çук. Пултарулăх коллективĕсем хăйсен ăсталăхĕпе савăнтараççĕ.

Уяв 10 сехетре Муркашра тĕп лапамра пуçланать. Пурне те йыхравлатпăр!

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

# Тăрăшуллă комбайнер



***Район шайĕнче ырă йăлапа çуллен ирттерекен Тыр-пул уявĕ – вырăнта ял хуçалăх ĕçченĕн тăрăшулăхне тимлĕхсĕр хăварманнин палли. Акă черетлĕ вырма хыçа юлчĕ. Ĕç коллективĕсенче тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем турĕç ĕнтĕ. Халĕ уява тухмалли çес юлчĕ. Уй-хир ĕçĕсене технологие пăхăнса вăхăтра пурнăçланăран кашни хуçалăхрах тырри-пулли кăçал кĕлет туллиех. Çак пуянлăха тăвас ĕçре "хир карапĕсен" штурвалĕ умне ларса вырмана тухăçлă ирттерекенсем – уйрăм хисепре, чысра.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Александр Ишаков – "Свобода" ял хуçалăх производство кооперативĕн инженерĕ. Вырма тапхăрĕ çитсен Александр Петрович кăçал та иртнĕ çулхи пекех "хир карапĕн" штурвалне алла илчĕ. Ĕç çине тĕплĕ хатĕрленсе, дисциплинăна пăсмасăр ĕçлесе хастар инженер-механизатор хăйне çирĕплетсе панă ДОН-1500 комбайнпа черетлĕ вырмара 1162 тонна тырă çапса тĕшĕлесе кĕлете кĕртме хевте çитерчĕ.***

**А. БЕЛОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

Ларуран

# Кун йĕркинчи ыйтусемпе

Октябрĕн 17-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен район Пухăвĕн черетлĕ ларăвĕ ĕçлерĕ. Лару ĕçне депутатсем пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, район администрацийĕн структура подразделенийĕсен яваплă ĕçченĕсем хутшăнчĕç. Ларăва депутатсен район Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев ертсе пычĕ.

Депутатсем ларура район бюджетне кăçалхи 9 уйăхра мĕнле пурнăçлани çинчен, Муркаш район администрацийĕн муниципалитет службин вакантлă должноçне йышăнма конкурс ирттермелли положение çирĕплетесси çинчен, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне йышăнакан çыннăн тата унăн çемйин членĕсен тупăшĕсем, расхучĕсем, пурлăхĕ пирки сведенисене район администрацийĕн официаллă сайтĕнче вырнаçтармалли е ку сведенисене пичетлесе кăларма массăллă информаци хатĕрĕсене памалли йĕркене çирĕплетесси çинчен, муниципалитет тĕрĕслевне ирттерекен органсене тата тĕрĕслевсен перечененне туса пырассин йĕркине çирĕплетесси çинчен, районăн муниципалитет пурлăхне приватизацилемелли 2018 çулхи прогноз планĕ çинчен, районăн муниципалитет пурлăхне Мăн Сĕнтĕр тата Оринин ял тăрăхĕсен, Çветуй Троица чиркĕвĕн харпăрлăхне парасси пирки калакан ыйтусене сӳтсе явса йышăнусем турĕç, депутатсен район Пухăвĕн хăш-пĕр йышăнăвĕсене улшăнусем кĕртрĕç.

Лару ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хутшăнчĕ, хăйĕн сăмахĕнче район бюджетне тупăшлăрах тумалли майсем çинче чарăнса тăчĕ.

Лару умĕн вара район администрацийĕн ларусен залĕнче Муркаш район уставне кĕртме палăртакан улшăнусене халăхпа сӳтсе яврĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Ертӳçĕсем канашларĕç

Иртнĕ эрнере районти ял хуçалăх предприятийĕсен тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем 9 уйăхри ĕç-хĕле пĕтĕмлетме канашлăва пуханчĕç. Канашлăва пуçласа район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Муркаш районĕ ял территорисене тăнăç аталантарнăшăн Мускаври иртнĕ агропромышленность куравĕнче бронза медале тивĕçнинче шăпах вĕсен тӳпи пурри-не палăртнă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Миронов хăйĕн сăмахĕнче вырман пĕтĕмлетĕвĕ япăх маррине пĕлтернĕ, выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ, фермăсене хĕле хатĕрлесси çинче чарăнса тăнă. Канашлура ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе усă курассине сыхăннă тата ытти ыйтăва çĕкленĕ.

## Сывлăх кунĕ иртет

Влаç органĕсем тата районти общеcтвăлла организацисем сывă пурнăç йĕркине аталантарас ĕçе ытлă-çитлĕ тӳпе хываççĕ. Ăна хапăллакансен йышĕ те халăхра ӳссех пырать. Апла пулсан вырăнсенче яваплă çынсем сывă пурнăç йĕркине аталантарасси-пе чылай ĕç туса ирттереççĕ.

Çитес шăматкун, юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче, черетлĕ Сывлăх кунĕ иртет. Çавна май "Сывлăх" спорт шкулĕ сывă пурнăç йĕркине тытса пырăнакансене хăйĕн патне йыхравлать. Çитсе курăр, ӳкĕнмĕр!

## Тĕл пулăва чĕнеççĕ

Юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче "Республиканский фонд капитального ремонта многоквартирных домов" коммерциллĕ мар организаци районти нумай хваттерлĕ çуртсенче харпăрлăхра хваттер тытакансемпе район администрацийĕн методпӳлĕмĕнче тĕл пулусем ирттерет. Йышăну вăхăчĕ – 10 сехетрен пуçласа 13 сехетчен. Кунашкал тĕл пулусене вăл е ку муниципалитетăн нумай хваттерлĕ çуртсенче пĕрлехи харпăрлăхри пурлăха юсассишĕн яваплă специалиста, ертсе пыракан компанисен представителĕсене явăçтарни нумай ыйту çине вăхăтлă хурав тупма май парать.

## Çемьесем ăмăртрĕç

Октябрĕн 12-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче çемьесен художество пултарулăхĕн "Пурте туслă çемьерен" фестиваль-конкурсĕ иртрĕ. Унта районти çемьесен 10 ансамблĕ хутшăннă. Кашни çемье ансамблĕ виçĕ тĕрĕслев витĕр тухнă. Пĕрремĕш вырăна Турай ял тăрăхĕнчи "Тăванлăх" çемье ансамблĕ (Егоровсем – Ивановсем) йышăннă. Иккĕмĕш вырăнта – Москакасси ял тăрăхĕнчи Тимофеевсен çемйи, виççĕмĕшĕнче – Катькас ял тăрăхĕнчи "Шанчăк" ансамбль (Моисеевсем).

**А. БЕЛОВ, Н. НИКОЛАЕВА** хатĕрленĕ.

Октябрĕн 20-мĕшĕ – Тыр-пул уявĕ

**АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĔНЧЕ ĔÇЛЕНĔ ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ!**

Çитес эрнекун район Тыр-пул уявне паллă тăвать. Кĕрхи çак пĕрлехи савăнăçлă кун АПК ветеранĕсемшĕн те ют мар. Эсир вăхăтра нумай ĕçлесе уй-хирти кашни тăваткал метр çĕрпе тулăх усă куртăр. Тăрăшуллă ĕçпе çĕршыв шайĕнчи парнесене, ăмăрту ялавĕсене тивĕçсе района малти рете кăлартăр. Кĕлете пуян тытма, туса илнине çухатусăр упрама çирĕп никĕс хывса хăвартăр. Эсир вĕрентнине асра çирĕп тытакансем, пĕрле тунă ÿсĕмсене самантлăха та алăран вĕçертменнисем паян та аталану çулĕпе пыраççĕ.

Тĕллевлĕ ĕç çĕнĕлĕхсене çул парать. Ял çыннин ырă ĕмĕтлĕ тăрăшулăхĕ пĕрлешÿллĕ кооперативсене, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене, килти хушма хуçалăхсене малтан мала илсе пырать.

Çиччĕ виçсе вăй хурсан çĕр-аннемĕр ĕçлекен çынна тулăх пурнăçпа усрать. Пĕрлехи пысăк тухăç ял экономикине тĕреклетет, çĕршыва вăйлатать. Çакна асра тытса АПК ветеранĕсен ĕçне малалла тăсса уй-хирти тата фермăри ĕçсене паян хутшăнакансене те Тыр-пул уявĕпе ăшшăн саламлатăп, çирĕп сывлăх, мирлĕ пурнăç, телей те юрату сунатăп!

**АПК ветеранĕсен районти канашĕн ертÿçи В. ВЯЗОВ.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2017 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнчи 870-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

***1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:***

– **Людмила Юрьевна КРАСНОВĂНА,** Муркашри вăтам шкулăн вырăс чĕлхипе литературин учительне;

– **Людмила Сергеевна ТИХОНОВĂНА**, Муркашри вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне;

– **Наталия Вячеславовна БОРЗАЕВĂНА**, Шурчари тĕп шкулăн аслă вожатăйне;

– **Ольга Моисеевна ВАСИЛЬЕВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне;

– **Надежда Владимировна ВАРЮХИНĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн чăваш чĕлхипе литературин учительне;

– **Николай Юрьевич ГОРНОВА**, Мăн Хураçкари тĕп шкулăн физкультура учительне;

– **Зинаида Юрьевна ГРИГОРЬЕВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне;

– **Ирина Аркадьевна ГРИГОРЬЕВĂНА**, Ильинкăри вăтам шкулăн сăнарлă искусство учительне;

– **Любовь Степановна ГОРШКОВĂНА**, Калайкассинчи вăтам шкулăн акăлчан чĕлхин учительне;

– **Альбина Владимировна ИВАНОВĂНА**, Ильинкăри вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне;

– **Саида Усмановна КОЛДАШОВĂНА**, Калайкассинчи вăтам шкулăн аслă вожатăйне;

– **Вера Валериановна МАЗИКОВĂНА**, Мăн Хураçкари тĕп шкулăн биологипе химин учительне;

– **Ангелина Геннадьевна МОКЕЕВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн географи учительне;

– **Оксана Станиславовна ПЕТРОВĂНА**, Тойкилтĕри тĕп шкулăн пуçламăш классен учительне.

***2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:***

– **Альбина Вениаминовна ТИХОНОВĂНА**, "Ударник" ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне.

Тыр-пул уявĕ умĕн

# Тăрăшсан çеç тупăш алла кĕрет

Пукрав иртрĕ пулин те, хресченĕн анлă уйхирĕсенче кĕрхи ĕçсем тĕппипех вĕçленмен-ха. Çакна эпĕ Юнкăри КМК "Агро" ял хуçалăх предприятине çитсен пĕрремĕш утăмранах асăрхарăм. Ĕçлекенсемпе тĕл пулса калаçни те ку енре кашниех пĕр шухăшлă пулнине çирĕплетрĕ. "Ял хуçалăхĕнче пушă та хуçасăр выртакан çĕрсем пулмалла мар, акнă-лартнă лаптăксемпе вара туллин усă курмалла. Кĕрхи илемлĕ кунсен кашни сехечĕпе ытларах ĕç пурнăçласа юлесси – пирĕн тĕллевре", – терĕ калаçу пуçламăшĕнче предприяти директорĕ В. Кондратьев.

Хуçалăхра паянхи ĕçсем, тĕпрен илсен, хĕле хатĕрленсе пулса пыраççĕ: хирте çĕртме сухи тăваççĕ, пахча çимĕç пухассипе ĕçлеççĕ, механизаци паркне вырмана хутшăннă ял хуçалăх машинисемпе агрегатсене хĕллехи управа лартассипе ĕçсем пыраççĕ.

– Вăхăт хăварт иртет. Умра – хĕл сиввисем. Çавăнпа та паян пирĕн умри тĕп тĕллев – ĕçре хамăра пулăшнă ял хуçалăх техникине управа ГОСТпа килĕшÿллĕ лартасси. Çакна тума пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Ĕçлекенсен тăрăшулăхĕ те ума лартнă тĕллевсене пурнăçласса шантарать, – терĕ механизаци паркĕн иртнĕ майĕ Валерий Семенович.

Çĕр ĕçĕ çине хуçалла пăхакан хуçалăх кăçал кăна 3 çул е ытларах выртакан "усман çеремсене" чылай пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Вĕсене ĕçсĕр вырттарманни ку çĕрсем çитес çул пысăк тухăçлă уй-хир пуласса шантараççĕ.

Калаçăва çыхăнтарса пырса ертÿçĕпе кăçалхи тыр-пул тухăçĕ пирки сăмах тапратрăм.

– Технологие пăхăнса ĕçлесен çĕр-аннемĕр тивĕçлĕ тухăç илме май парать. Кăçал эпир тырă-пулă тата пахча çимĕç туса илессипе тимлесерех ĕçлерĕмĕр. 150 гектар çинчи кĕрхи тулă та, 200 гектар йышăннă сĕлĕ те, 50 гектар купăста та хуçалăха кăçал тупăш çулĕпе утма май пачĕç. Паянхи куна эпир хамăра тивĕçтерекен хаксемпе тырă сутатпăр, купăста та йăран çинченех хăйĕн хуçине тупса пырать.

– Сутни лайăх-ха, анчах эсир ял хуçалăх культурисене упрассипе те çанă тавăрсах ĕçлетĕр. Çапла мар-и? – кăсăкланатăп эпĕ.



– Пирĕн тăрăхри çĕр ĕçченĕ юлашки çулсенче ял хуçалăх культурисене тухăçлă туса илме вĕренчĕ. Туса илнине упрасси тата тивĕçлĕ хаксемпе сутасси – çĕр ĕçченне хумхантаракан умри ыйтусем. Çакна шута илсе эпир юлашки çулсенче çĕнĕ технологипе пахча çимĕç упрамалли хранилищĕсем туса хута ятăмăр. Вĕсем пулăшнипе продукци сутăнаслăхăн вăхăтне тăсатпăр, хакĕпе те выляса илетпĕр. Ку çул пире малалла татах та тупăшлăрах аталанма пулăшасса шанатăп, – пулчĕ хурав.

Кунта тĕрĕс çул суйласа илнипе хуçалăхăн механизаци паркĕ çулсерен çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Производство пулсан çĕнĕ техникăна та, тухăçлăрах технологисене те туянма пулать çав. Аталанăвăн çак çулйĕрне кунта малашлăха пăхмалли тĕп ен тесе хаклаççĕ. Çĕнĕ техника тенĕрен, кăçал кăна КМК "Агро" хуçалăх купăста лартмалли 2 агрегат тата çĕре кăпкалатмалли фреза илме пултарнă. Иртнĕ çулсенче çеç туяннă "Палессе-1218" комбайн, Австринче кăларнă "Фогльнот" сеялкăпа культиватор, тырă сортламалли икĕ çĕнĕ комплекс, "ОП-2500" опрыскиватель, çĕнĕ погрузчик паян ĕçе пахалăхлă пурнăçламалли ĕç хатĕрĕсем пулса тăраççĕ.

Асăннă хуçалăх пахча çимĕçпе тухăçлă ĕçлет тенĕрен, вĕсен çакна валли виçĕ теплица пуррине те палăртса хăвармалла.

– Кÿлĕннĕ лава пĕрле туртсан чăнкă сăрта та хăпарма пулать. Çак ĕмĕте пурнăçа кĕртессипе тăрăшатпăр паян, – терĕ Валерий Семенович ешерекен кĕрхи тулă пуссинчен куçне илмесĕр теплицăсем еннелле сывхарнă май. КМК "Агро" юлашки çулсенче пахча çимĕç туса илессипе ытларах тимленĕрен, харпăрлăхри 3 теплица **(сăн ÿкерчĕкре)** – ĕç ăнăçăвĕн никĕсĕ. Çур акине хатĕрленнĕ вăхăтра кунта купăста калчи ытлă-çитлĕ туса илекен юнкăсем купăста лартса пĕтернĕ хыççăн хăяр çине куçаççĕ. Кăçал ку пахча çимĕçе 6 тонна туса илни мал туртăмлă шухăшсем çуратать. 5 гектар кишĕр ÿстерни те хушма укçа-тенкĕ ĕçлесе илме пулăшнă.

Çĕр пулăхлăхне ÿстермесĕр тухăç илесси иккĕленÿллĕ. Çавăнпа кăçал 350 гектар çĕртме сухи тума та ĕлкĕрнĕ. Ку ĕçсем малалла пыраççĕ: Михаил Тепеевпа Геннадий Миронов Т-150 тракторсемпе кулленех хирте.

Хуçалăхра кĕрхи ĕçсем епле пынипе паллашма питех те кăмăллă пулчĕ. Кăçалхи çанталăк условийĕсем çу каçа хресчене самаях тĕрĕслерĕç пулсан та, мал туртăмлă тимлекен алă усман. Ĕçлесен вара тупăш та алла кĕрет, хуçалăх экономики те вăйланать, хресченĕн çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсем çураласçĕ.

**А. БЕЛОВ.**

# «Çĕр улмие пĕтĕмпех пухса кĕртрĕмĕр»

***Çанталăк кăçал ял хуçалăх ĕçченне тĕрлĕ енлĕ тĕрĕслерĕ пулин те, кĕр кунĕсем япăх мар килчĕç, мĕн акни-лартнине пухса кĕртме май пачĕ. Тĕрлĕ сăлтава пула юлашки çулсенче çĕр улми туса илес ĕç те чăрмавлăрах пулни палăрнă пулсан, черетлĕ тапхăра хурлама сăлтав çук.***

***Районти хуçалăхсем кăçал "иккĕмĕш çăкăра" пĕтĕмпе 360 гектара яхăн лартрĕç, ытларах пайне вара "Ударник" хуçалăхра ÿстерчĕç. Районти Тыр-пул уявĕ умĕн асăннă хуçалăх ĕç-хĕлне ертсе йĕркелесе пыракан Владислав АНАНЬЕВ хуçалăх ĕçĕпе паллаштарма кăмăл турĕ:***

– Черетлĕ вырма тапхăрĕ "Ударник" хуçалăхшăн япăх килмерĕ. Палăртнă ĕçе пĕрлехи тăрăшулăхпа пурнăçлама вăй-хал çитертĕмĕр, çанталăк панипе усă куртăмăр. Маларахри çулсенче хуçалăх çĕр улми ÿстерессипе тухăçлă ĕçленĕ пулсан, кăçал та ку енĕпе ăнăçлă тăрăшрăмăр, 200 ытла гектар çинчен çĕр улми пухса илтĕмĕр.

Пĕр гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 150 центнерта танлашрĕ, ку кăтарту япăх мар тесе шухăшлатпăр. Çитес çул та ку енĕпе ăнăçлă ĕçлес кăмăллă, хуçалăх ячĕ-сумĕ çĕр улмипе хăпарнине тÿрре кăларма тăрăшăпăр.

**– Çĕр улми пусси пĕчĕк маррине шута илсе хушма вăйсене те явăçтарнă пулĕ-ха?**

– Çанталăк панипе туллин усă курас тата ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе хуçалăх тулашĕнчи техникăпа çынсене явăçтартăмăр. Аякри ялсенчи ĕçлекенсене автобуспа турттартăмăр, çĕр улми кăларса тирпейлесси çинче тăрăшнисене тÿлевсĕр апатлантартăмăр.

"Иккĕмĕш çăкăр" пуссинче 7 комбайн, çĕр улми кăларакан 1 копалка тата тиев турттаракан 7 – 8 автомашина ĕçлерĕ. Çĕр улми хранилищи патĕнче суйламалли оборудовани вырнаçтарни те ĕçе хăвăртлатма май пачĕ. Çавăн пекех хранилищĕре те çакăн йышши оборудованипе ĕçлеççĕ.

**– Владислав Кириллович, "Ударник" хуçалăх яланах паха йышши сортсемпе кăна ĕçленĕ. Халĕ ку тĕлĕшпе еплерех лару-тăру?**

– Хуçалăх юлашки çулсенче "Любава", "Снегирь", "Удача", "Невский", "Гала" сортсемпе ĕçлет. Малашне те çĕнĕ сортсемпе ĕçлесси пирки шухăшлатпăр.

**– Çĕнĕ йышши оборудованипе усă курни тăкака пĕчĕклетме май панине шута илсе çĕр улми пуссинче ĕçлемелли техникăна та çĕнетни курăнать.**

– Хуçалăх пурлăх базине çĕнетесси çине çулсеренех пысăк тимлĕх уйăрать. Çĕр улми суйламалли оборудовани кÿрсе килнĕ, унсăр үçне маларах çĕр улми кăлармалли комбайн туяннă. Малашлăх планĕсем пĕчĕк мар, ытти çĕнĕлĕхпе те усă курма тăрăшатпăр.

**– Кĕрхи культурăсене акассипе, çĕр хатĕрлессипе тата еплерех ĕçлерĕр?**

– Хуçалăх кĕрхи культурăсене акассин планне май пур таран пурнăçларĕ, 160 гектар çинче акса хăварчĕ. Çĕртме сухине тăвассипе те япăх мар ĕçлерĕмĕр.

Уй-хиртен ферма тавраш не утă-улăм çителĕклĕ турттарса хатĕрлерĕмĕр. Вăрлăхлăх акнă кукурузăна пиçсе çитменрен силоса яма тиврĕ. Халĕ ăна фермăсене турттараççĕ. Ку вылăх-чĕрлĕхшĕн уйрăмах пысăк пахалăхлă апат шутланать.

Самантпа усă курса эпĕ хуçалăхра тăрăшакан ĕçченсене вырмара ăнăçлă тимленĕшĕн тав тăватăп, ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕпе саламлатăп, малашне те тухăçлă тăрăшма çирĕп сывлăхпа вăй-хал сунатăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Акци

# Харпăр хăй хăрушсăрлăхĕшĕн

Харпăр хăй даннăйĕсене хÿтĕлес ыйту хальхи вăхăтра питĕ çивĕч тăрать. Мĕншĕн тесен çак даннăйсемпе такам та усă курма пултарать. Калăпăр, Австралире пурăнакан çын та Европа çĕршывĕнче пурăнакан пĕр-пĕр çын пирки çăмăллăнах пĕлме май тупайрать. Апла пулсан кун пек даннăйсемпе ултавçăсем те усă курма пултараççĕ. Çавăнпа та кашни çыннăн харпăр хăй пирки калакан информацие тĕрĕс усă курма пĕлмелле.

Çак тĕллевпе ĕнтĕ Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви тата Роскомнадзорăн Чăваш Енри управленийĕ ятарлă акци ирттерет. Октябрĕн 18–24-мĕшĕсем пирĕн республикăра "Харпăр хăй даннăйĕсене хÿтĕлелли эрне" ятпа иртесçĕ.

Çак акцие хутшăнакансен йышне республикăри пур вĕренÿ организацийĕ те кĕрет. Ку темăпа тĕрлĕ калаçу, пуху ирттермелле.

"Муркаш районĕнчи шкулсем те çак акцие активлă хутшăнаççĕ, мĕншĕн тесен палăртнă тема пур ачашăн та, ашшĕ-амăшĕшĕн те кăсăклă, вĕсен харпăр хăй хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă. Çавăнпа та шкулсенчи мероприятисен планĕпе килĕшÿллĕн тематика класс сехечĕсем, ятарлă урoксем тата ытти тĕрлĕ мероприяти ирттерме пăхса хунă", – пĕлтерчĕ район администрацийĕн вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова.

Республикăри акци октябрĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Ен Правительствин çуртĕнче çыннăн даннăйĕсен базине ĕçлекен операторсем тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесси пирки калакан Кодекса алă пусса çирĕплетнипе вĕçленет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт

# Пăхаттирсен турнирĕ

Кире пуканĕ йăтакансен "Хыпар" хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртерекен Пĕтĕм Раççейри XXXIV турнирĕнчен шутлă кунсем юлчĕç.

Аса илтеретпĕр, ăмăртăва юпа уйăхĕн 20 – 22-мĕшĕсенче Шупашкарти "Спартак" спорт керменĕнче пустаранĕç. Турнир кĕçнерникун 14 сехетре уçăлĕ. "Хыпар" хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен кăçалхи турнирта пăхаттирсен "Раççей спорт мастерĕ" ята тивĕçессишĕн те тупăшĕç. Ăмăртăва 20-е яхăн регионтан спортсменсем килсе çитмелле.

Призыв

# Октябрьтех ăсатма тытăнаççĕ

**Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатĕнче районти призыв комиссийĕн ларăвĕ иртрĕ.**

Çара каяс кăмăл пур-и? Раççей çарĕн хăш вăйĕ ытларах килĕшет? Водитель удостоверенийĕ пур-и?

Çак тата ытти нумай ыйтăва пачĕç призывниксене районти призыв комиссийĕн ларăвĕнче.

Ыйтусен хуравĕсем тăрăх пĕтĕмлетӳ тăвас пулсан, районти призывниксем тĕрлĕ енлĕ аталаннă яшсем пулни яр уççăн курăнать: шкул хыççăн аслă шкулсемпе техникум-колледжсенче пĕлӳ илнĕ хыççăнхисем те пур, кăçал кăна шкултан вĕренсе тухнисем те, тин çеç 18 тултарнисем те, çемьеллисем те, спорт разрядне илнисем те, спортра ытлашши туслах пулманнисем те... Çамрăксене тĕрлĕ енлĕ характеристика пама пулать.

Вĕсене пĕрлештерсе тăраканни вара – яшсем Раççей çарĕн мăнаçлăхне, вăйне курса тăни тата çав вăйлă çара хăйсен кăмăлĕпех кайма хатĕрри.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ Владимир Казаков комисси членĕсене çурхи призыв пĕтĕмлетĕвĕпе те паллаштарчĕ. Çурхи призыв кампанийĕнчи плана тултарнă. Яшсене çара ăсатнипе пĕрлех шкултан вĕренсе тухнă çамрăксенчен çар пĕлĕвне паракан аслă шкулсене вĕренме кĕме кандидатсене суйласа илессипе те тимленĕ. Каламалла, документсене пухнă çамрăксенчен 5-шĕ çак вĕренӳ çулĕнче çар ĕç пĕлĕвне Раççейри тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕнче пухма тытăннă. Çавăн пекех çара контракт мелĕпе ярассипе те ĕçленĕ.

Кĕрхи призыв тапхăрĕ вăхăтĕнче вара Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатĕнчен çара 85 яша ăсатмалла, вĕсенчен 50-шĕ – Муркаш районĕнче пурăнакансем.

Комисси ларăвĕнче медицина тĕрĕслевĕнчи кăтартусем тăрăх çара каяссинчен хăтармалли çамрăксем пуррине те палăртрĕç, куçăмлă майпа вĕренекенсене отсрочка парасси пирки те тивĕçлĕ йышăнусем турĕç. Кĕрхи призывпа çара каякансене октябрь вĕçĕнче çара ăсатма пуçлаççĕ.

Тепĕр çĕнĕлĕх пирки те каласа хăвармалла. Хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕн те, общество организацисен представителĕсен те, журналистсен те призывника служба вырăнĕ таран ăсатма ирĕк пур. Çул укçи – харпăр хăй кĕсйинчен. Апла пулсан ку çĕнĕлĕхпе усă курма та май пур.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ял тăрăхĕнче

# Асăну хăми уçрĕç

Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Çĕн Матьăк ялĕнче вăрçăран таврăнайманнисене халалласа октябрĕн 14-мĕшĕнче 11 сехетре Асăну хăми уçрĕç. Унта пуç хунă кашни салтак ятне çырса хунă. Асăну хăмине илемлĕ карта тытса вырнаçтарнă.

Николай Яковлев та хăйĕн "Сурăм çăлтăрĕсем" кĕнекинче Çĕн Матьăкран 27 салтак таврăнманни çинчен çырса хăварнă. Халĕ Асăну хăми çине ытларах ятсем те тупса çырнă.

Çĕн Матьăк ялĕн çыннисене мухтамалла. 13 ялтан Йӳçкасси, Вăрманкасси, Панкли, Кив Матьăк ялĕсенче Асăну палăкĕсем пулнă пулсан, халĕ çĕнматьăксем хутшăнчĕç.

Мероприятие çынсем нумаййăн пухăнчĕç, вăл шутра культура ĕçченĕсем те, вырăнти ĕçлĕ çынсем те. Шкул ачисем пуç хунисен сăн ӳкерчĕкĕсене йăтса тăчĕç.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Йӳçкассинчи шкул директорĕ Юрий Яковлев, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин, ветерансен канашĕн ертӳçи Геннадий Малинин текех вăрçă ан пултăрччĕ тесе палăртрĕç. Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий атте асăну вырăнне сăвапларĕ ăна, тирпейлĕ тытмалли çинчен асăнчĕ. Культура ĕçченĕсем те сăмах каларĕç, вĕсем çумне ыттисем те хутшăнчĕç.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

Патшалăх услугисем

# МФЦ урлă – меллĕрех, хăвăртрах

***Пурнăç тăршшĕпе çыннăн темĕн тĕрлĕ документ та хатĕрлеме тивет. Ĕç хучĕсемпе тĕрлĕ инстанцие çитме вара, пытарма кирлĕ мар, нумайăшĕн чăтăмлăх çитсех каймасть. Çавăнпа та Муркашра нумай функциллĕ центр пурри пысăк çăмăллăх темелле.***

***Районта пурăнакансем те документ пухассипе е пĕр-пĕр документа алла илессипе çыхăннă ыйтăвĕсене МФЦ урлă татса пама кăмăллани сисĕнет. Центрта çынсене электрон мелпе черет çыранса специалист йышăнасса кĕтме хăтлă зал кăна мар, пĕчĕк ачасемпе килекенсем валли ятарлă кĕтес те йĕркеленĕ.***

***Хальхи вăхăтра центр чылай услугăна электрон мелпе илме пулăшать, вăл шутра – пенси ыйтăвĕпе çыхăннисене те. Кун пирки тĕплĕнрех Нумай функциллĕ центрăн директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Ирина ЩЕРБАКОВА каласа пачĕ:***

– Пенси фончĕн услугисене тивĕçес тĕллевпе кăна кăçал пирĕн центра 600 ытла çын килнĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ – амăш (çемье) капиталне тивĕçес ыйтупа тата пенсие обязательнăй йĕркепе страхланин свидетельствине илес ыйтупа.

МФЦ урлă ку ыйтусемпе кăна мар, Пенси фончĕн ытти услугипе те тивĕçтеретпĕр. Çынсем пенсие çитерсе парас йĕркене улăштарасси пирки, пенсин пухăнакан пайне инвестицилесси пирки, соцпакет е ăна укçан илсе тăрасси пирки те пирĕн пата килеççĕ. Пенсие çĕнĕрен шутласа пама ыйтакансем те хальхи вăхăтра йышлăн.

Эпир амăшĕ капиталне тивĕçнисенчен çав укçа-тенкĕпе е унăн пĕр пайĕпе усă курасси çинчен те заявленисем йышăнатпăр.

Уйрăм категорисене кĕрекен граждансем уйăхсерен парса тăракан тӳлеве илессипе çыхăннă заявленисемпе те пирĕн пата килме пултараççĕ.

Çавăн пекех эпир граждансене пенсие обязательнăй йĕркепе страхланин тытăмĕнче регистрацилеме пулăшатпăр, вăл шутра – свидетельство улăштарма е свидетельство дубликатне илме те.

Пенси çумне федераци шайĕнчи тӳлевсене хушса парассипе çыхăннă заявленисене те, пенсин страхланă пайне, пухăнакан пайне палăртассипе тата тӳлессипе çыхăннă заявленисене те йышăнатпăр. Граждансене хăйсем ыйтнă тăрăх вĕсен пенсийĕ пирки калакан справкăсем паратпăр тата Пенси фончĕн ытти услугине тивĕçме те пулăшатпăр.

Пирĕн пата килекенсен пур ыйтăвне те эпир яланах тулли хурав пама тăрăшатпăр, документсем пирки тĕплĕ ăнлантаратпăр. Пурне те хапăл туса йышăнатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Çитменлĕхсене пĕтерсен ӳсĕм пулать

"Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме саккунлă пур майпа та усă курмалла. Тивĕçсене тӳрĕ кăмăлла пурнăçлассинчен тытăнмалла та малалла пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулĕ. Харпăр хăйне тивĕçлĕ тытасси кирек хăш вăхăтра та малта пулмалла, служба вăхăчĕ мар пулсан та", – çапла сĕнӳпе вĕçлерĕ Чăваш Ен Шалти ĕçсен министерствин харпăр хăй тытăмĕн управленийĕн пуçлăхĕ Дмитрий Андреев шалти ĕçсен Муркаш районĕнчи пайĕн иртнĕ тăхăр уйăхри ĕçне пĕтĕмлетме килнĕ канашлăва вĕçлесе.

Канашлăва район прокурорĕ Сергей Павлов, район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Любимов, право сыхлав органĕсен районти представителĕсем тата пай çумĕнчи ветерансен тата общество канашĕсен членĕсем хутшăнчĕç. Хăйсен сĕнĕвĕсене пачĕç.

Шалти ĕçсен Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ Владимир Степанов хăйĕн докладне нумаях пулмасть иртнĕ тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕнчен пуçларĕ. Тĕрĕслевре полицейскисен ĕçĕнчи ӳсĕмсем те, çитменлĕхсем те лайăх палăрнине каларĕ вăл. "Районта, пĕтĕмĕшле илсен, лару-тăру стабиллĕхпе палăрса тăрать. Апла пулин те пирĕн пайри хăш-пĕр уйрăмсен ĕçе вăйлатмалла. Тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме тытăннă", – пĕлтерчĕ пай пуçлăхĕ.

Владимир Степанов докладĕнче районта уйрăмах йывăр преступленисен хисепĕ, çынна вĕлернĕ фактсем тата çыннăн сывлăхне йывăр сиен кӳнĕ фактсем нумайланни палăрчĕ. Ку – пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе профилактика ĕçĕ çине те, преступленисене асăрхаттарассипе çыхăннă ытти самант çине те тимлĕх ытларах уйăрмалли курăнерет.

Экономика преступленийĕсене, наркотиксен тата хĕç-пăшалăн саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене тупса палăртассипе тата, паллах, вĕсене усса парассипе те тимлĕрех ĕçлемеллине палăртса хăварчĕ пай пуçлăхĕ. Докладра вăл следстви тата дознани уйрăмĕсене ĕç эффективлăхне ӳстерме ыйтса каларĕ.

Пурĕ вара иртнĕ тăхăр уйăхра районта 219 преступлени пулнине регистрациленĕ (пĕлтĕр çак вăхăта – 248). Халăхран йĕркене пăсни çинчен е преступлени туни çинчен калакан хыпарсем кăшт сахалланнă. Апла пулин те Владимир Степанов çынсем сыхă пулни, асăрхаттарăва шута илни сисĕннине каларĕ, çакна вăл Интернет урлă е банк карттисемпе усă курса тунă ултавлă ĕçсен шучĕ кăшт чакнипе те палăртрĕ.

Йĕркене пăснă тата преступлени тунă фактсем, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 7 ял тăрăхĕнче ӳснĕ. Пурĕ вара районта 4287 çынна административлă майпа явап тыттарнă. Йĕркене пăсакансем тата преступлени тăвакансем ытларахăшĕ ниçта та ĕçлемен, малтан та судпа айăпланнă, эрех-сăрапа иртĕхекен, яланхи тупăш çук çынсем. Ку ӳкерчĕк темиçе çулах улшăнмасть. Пĕрре преступлени тунăшăн явап тытнă хыççăн тепĕр хут преступлени тăвакансем пулни уйрăмах пăшăрхантарнине палăртрĕç канашлура. Çавăнпа та надзор ĕçне те вăйлатма сĕнӳ пулчĕ.

Канашлура уйрăм ертӳçисем çул çитменнисене яланах тимлĕх уйăрмаллине, çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх тата ытти самантсем пирки тухса калаçрĕç. Çитменлĕхсене курса хакларĕç хăйсен ĕçне, ларутăрăва лайăхлатмалли мелсене те палăртрĕç.

Районти пайра вакансисем пурри пирки те, Шалти ĕçсен министерстви Патшалăх пĕрлехи порталĕ урлă услугăсемпе электрон мелпе тивĕçтерни пирки те сăмах хускатрĕç. Каламалла, электрон мелпе тĕрлĕ документа ытти чухнехинчен икĕ хут кĕске вăхăтра тума май пур. Çавăнпа та çынсем Шалти ĕçсен министерстви тивĕçтерекен услугăсене илме (паспортпа çыхăннă, тĕрлĕ справка илессипе çыхăннă ыйтусем) электрон мелпе ытларах усă курма тытăнасса шанас килет.

Полицейскисене ĕçре профилактика ĕçне пурнăçлакан ытти субъект та, ял çыннисем те пулăшаççĕ. Çавăнпах Владимир Степанов район администрацине тата право сыхлав органĕсемпе халăх дружиннике́сене, общество организацисене те тав турĕ. Ял çынни тимлĕ те асăрхануллă пулни, çавăн пекех ялта мĕн пулса иртнипе кăсăкланса ялти пурнăçа лайăххах тăвас тени, паллах, ял лăпкăлăхĕ çине ырă витĕм кӳме тивĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Юбилей



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Макаçи ялĕнче пурăнакан **Людмила Васильевна СЕМЕНОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçра сана мĕнпур ыррине кăна сунатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кунçулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр. Пурнăçри кашни куну ырлăхпа, юратупа, çутă ĕмĕтсемпе тултăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул, чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăн. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланса пычăр. Ачусемпе мăнукĕ савăнтарса тăччăр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа мухтанатпăр, ăшă кăмăлупа таравтăлăхушăн тав тăватпăр.

**Ăшă салампа: ашшĕпе амăшĕ, пиччĕшĕ, йăмăкĕ, шăллĕ хăйсен çемйисемпе тата Даниловсен çемйи.**



Муркаш салинче пурăнакан хисеплĕ кӳршĕне, юлташа – **Галина Ивановна ЗУЗĂНА** юпа уйăхĕн 20-мĕшĕнчи çавра та сумлă юбилейпа саламлатпăр. Галина Ивановна, пурнăçăн анлă çулĕ тăкăр та çутă чуптăр, пурăнан пурнăçа мăшăрупа, уйрăлу çăлтăрне курмасăр, ачусен, мăнукусен туслă та хаваслă сассипе иртетрмелле пултăр. Çемье ăшши сире пурнăçра вăй-хал парса тăтăр, ĕмĕтсене пурнăçлама пулăштăр.

**Çирĕп сывлăх сунса: юлташĕсемпе кӳршисем.**



Ахмане ялĕнче пурăнакан **Николай Егорович ЛЬВОВА** 80 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕр, чун-чĕре хăвачĕ ан иксĕлтĕр, кашни çутă кун ырлăхпа тултăр. Сĕтелӳ çăкăртăварпа, кĕрекӳ хисеплĕ те юратнă тăванусемпе яланах тулли пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Николай Тихонович СЕРГЕЕВА** 65 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурнăçа юратса пурăнни, ĕçрен ютшăнманни, ырми-канми тăрăшни – пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 10 мăнукĕ.**



Сосновка ялĕнче пурăнакан **Андрей Владимирович ЖИРНОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм, пурнăçу тулăх пултăр. Ĕмĕтленнĕ, палăртнă тĕллевсем яланах пурнăçланса пычăр. Ĕмĕр сукмакĕ такăр та вăрăм пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, Ивановсен, Захаровсен çемйисем, Мускаври кумисем.**



Юратнă та хаклă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Мария Прохоровна МАРТЫНОВĂНА** сумлă 90 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хăват, канлĕ ватлăх сунатпăр. Кашни килекен çутă кун ăнăçупа телей, савăнăçпа ырă кăмăл кӳтĕр. Пире кун çути парнелесе çын тунăшăн çĕре çити пуç таятпăр, хисеплетпĕр, юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: ачисемпе мăнукĕсем, вĕсен çемйисем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Хаклă çыннăмăра – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Турикас ялĕнче пурăнакан **Альбина Мефодьевна ХРОМОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми вăй-хал, пархатарлă вăрăм кун-çул сунатпăр. Кĕрекӳ ырă çынсемпе тулли пултăр, телей курки тăкăнса тăтăр. Ĕмĕр тăршшĕпе тулăх пурнăçпа савăнса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: Кирилловсен, Дашковсен çемйисем.**

Юратнă кумана – Турикас ялĕнче пурăнакан хисеплĕ çыннăмăра, нумай çул «Тюльпан» ача садĕнче тутлă апатçимĕç пĕçернĕ çĕрте ĕçленĕ **Альбина Мефодьевна ХРОМОВĂНА** илемлĕ юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телейлĕ пурнăç сунатпăр. Мĕн ĕмĕтленнисем пурте пурнăçланччăр. Сана ырă сунса хисеплесе саламлатпăр.

55 çула çитрĕм тесе ан хурлан,
55 çул вăл нумай мар.
Вăрăм пултăр сан кун-çул,
Чир-чĕр çине алă çул.

**Салампа: кума хĕрĕ çемйипе.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68, от 28.04.2011г., СНИЛС №110-257-732 10, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 14148, состоящего в некоммерческой саморегулируемой организации Ассоциация "Гильдия Кадастровых Инженеров" №802/10-16 от 13.10.2016г., выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:030101:15, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Ильинское сельское поселение, выс. Васильевка, ул. Главная, д. 3.

Заказчиком кадастровых работ является Прокопьев Владимир Геннадьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Максимова, д. 9, кв. 15.

Собрание по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу:Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Ильинское сельское поселение, выс. Васильевка, ул. Главная, д. 3, 19.11. 2017г. в 9 часов 00 мин.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 в межевой организации ООО "Аршин".

Требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 18.10.2017г. по 18.11.2017г., обоснованные возражения о местоположении границ земельных участков после ознакомления с проектом межевого плана принимаются с 18.10.2017г. по 18.11.2017 г. по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежные земельные участки, в отношении местоположения границ которых проводится согласование: кадастровый номер 21:17:030101:57, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Ильинское с/п, высел. Васильевка, ул. Прибрежная, дом 6, принадлежащий Данилову Павлу Федоровичу.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок (часть 12 статьи 39, часть 2 статьи 40 Федерального закона от 24 июля 2007г. №221-ФЗ "О кадастровой деятельности").

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером ООО "НПП"Вершина", Никитиным Геннадием Олеговичем, квал.аттестат №21-11-57, почт. адрес: ЧР, г. Чебоксары, ул. Университетская 13-56, эл.почта-genan_tennis@mail.ru., конт.телефон: 8-917-656-25-07, в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:121201:826, расположенного по адресу: ЧР, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество "Дружба", уч-к 751, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границ земельного участка. Заказчиком кадастровых работ является Бовырина Валентина Николаевна, конт. телефон: 8-917-679-71-09, почт. адрес: ЧР, г. Чебоксары, б-р Юности, 21-23. Собрание заинтересованных лиц в согласовании границ состоится 25 ноября 2017 г. в 10:00 по адресу: ЧР, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество "Дружба", уч-к 751. С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: г. Чебоксары, ул. Университетская, 13-56. Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевого плана насчет местоположения границ земельного участка принимаются только в письменной форме в течение 30 дней с момента опубликования настоящего извещения в рабочие дни (понедельник – пятница) с 9 часов 00 минут до 17 часов 00 минут по адресу: 428034, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Университетская, 13-56; в филиале ФГБУ "ФКП Росреестра" по Чувашской Республике - Чувашии по адресу: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский пр-т, д.37. Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границ: ЧР, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество "Дружба", уч-к 749, кадастровый номер 21:17:121201:824; ЧР, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество "Дружба", уч-к 744, кадастровый номер 21:17:121201:819; а также все заинтересованные лица. При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документы, удостоверяющие личность, а также документы о правах на земельный участок.

* * *

Продаю банную печь. Куплю молодняк – бычков 2 – 3 мес.
Тел.: 8-906-132-16-06.

* * *

Куплю коров, телок, бычков, молочных телят куплю дорого. Тел.: 8-905-341-69-25. 1-3.

* * *

Продается красная корова с теленком (3 отел). Тел.: 8-927-998-08-54.

* * *

Март уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне, декабрĕн 8-мĕшĕнче пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки тата тăваткал тюкланă урпа, тулă улăмĕ сутатпăр. Тел.:8-927-857-80-51, 8-927-990-95-38.

Доставка: гравмасса, песок, щебень, керамзит. НЕДОРОГО. Тел.: 8-906-380-12-36. 2-5.

* * *

Куплю скотину. Бычков (от 1 месяца до 3 лет), коров (молодых и старых), вынужденный забой. Работаю с сельхозпредприятиями. Тел.: 8-906-382-99-99. Дима. 2-4.

* * *

СПК «Ударник» реализует пшеницу и ячмень по цене 7,50 руб. за 1 кг. Тел.: 8-906-131-05-01. 2-3.

* * *

Услуги мини-экскаваторов, 1 час – 1000 руб., плюс доставка 1500 руб. по Моргаушскому району. Работаем по договору, по акту выполненных работ, счет-фактуре. Обращаться: с. Моргауши, ул. Ленина, д. 22. Тел.: 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 2-3.

* * *

СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень по 6 руб., пшеницу по 8 руб. Тел.: 62-1-97. 2-2.

* * *

Продаю ПЕСОК РЕЧНОЙ, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ, ЦЕМЕНТ, КИРПИЧ, КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ БЛОКИ. Доставка до 5 тонн. Тел.: 8-905-342-70-56. 2-14.

* * *

Куплю коров, телок, бычков. Тел.: 8-967-478-39-46. 2-10.

* * *

9 уйăхри хĕрлĕ-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тереç ялĕ.
Тел.: 8-927-844-53-18. 2-2.

* * *

Февральте çиччĕмĕш пăруламалли хура ĕне сутатпăр. Тел.: 8-937-386-34-82, 8-937-376-65-36.

* * *

7 уйăхри хĕрлĕ тĕслĕ тына пăру сутатăп.
Тел.: 8-917-659-47-07. 1-2.

* * *

Фермер хуçалăхĕ сутать: тулă – 7 тенкĕ, урпа – 7 тенкĕ, сĕлĕ – 6 тенкĕ, рулонти утă – 800 тенкĕ.
Тел.: 8-987-760-57-71. 1-2.

* * *

Продаю мелкий картофель для скотины. Цена договорная. Тел.: 8-962-601-77-78.

**Спешите, осенняя АКЦИЯ в магазине «Василек» на всю КРУПНУЮ БЫТОВУЮ технику!!!**
**СКИДКИ, РАССРОЧКА, КРЕДИТ, БЕСПЛАТНАЯ ДОСТАВКА!!!**
**ХОЛОДИЛЬНИКИ, МОРОЗИЛЬНЫЕ ЛАРИ, МОРОЗИЛЬНИКИ, ЖК-ТЕЛЕВИЗОРЫ, ГАЗОВЫЕ ПЛИТЫ, СТИРАЛЬНЫЕ МАШИНЫ, МИКРОВОЛНОВЫЕ ПЕЧИ, ПЫЛЕСОСЫ.**
Магазин «ВАСИЛЕК» на территории Моргаушского рынка: с. Моргауши, ул. Чапаева, д 44А/1.
Тел.: 8-961-340-68-78. 4-6.




Наши цены вас приятно удивят. Электротовары в широком ассортименте. Мы открылись в магазине «ДУЭТ».

**Салон штор Ксения**
Тюли, портьеры, жалюзи, карнизы, пошив
8-937-370-44-99
с.Моргауши, ул. Гагарина, д.2
**Мебельный салон Гармония**
Корпусная и мягкая мебель, фабричная мебель и под заказ, распродажа дверей!!! 3-10.
8-917-671-37-33, 8-952-027-18-39

ПРОДАЮ ПЕСОК, ОПГС (гравмасса), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. Моргауши. НЕДОРОГО.
Тел.: 8-927-862-42-44. 6-10.

1-10. компания немецкие **ОКНА И ДВЕРИ**
• рольставни • ворота • жалюзи
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
ВСЕГО от 3900 руб/м²
8(927)844-78-11 · 68-78-01

Продаю асфальтную крошку, гравмассу, щебень, бой кирпича, песок речной, карьерный, торф, чернозем, навоз. Недорого. Пенсионерам – скидка. Доставка. Тел.: 8-961-347-25-47, 8-917-676-93-79. 3-5.

* * *

Продаем со склада: ячмень, пшеница. Доставка.
Тел.: 8-927-843-52-40.

### Тав тăватăп

Пирĕн чи çывăх çыннăмăра, юратнă аннене, Атикасси ялĕнче пурăннă Раиса Васильевна Черновăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Ачисем.**

Эпир юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче çывăх тăвансăр Людмила Александровна Николаевасăр тăрса юлтăмăр. Пирĕн хуйха пĕрле пайласа ăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн Турай больница уйрăмĕн ертӳçине Светлана Юлиановна Павловăна, унти ĕçченсене, тăвансене, хисеплĕ ял-йыша тата ĕçтешсене чунтан тав сăмахĕ калатпăр. Телейлĕ кун-çул сирĕн вăрăм пултăр, сире Турă сыхлатăр!

**Турайри Герасимовсен çемйи.**

АУ Чувашской Республики ДПО Учебный Центр "Нива" Минсельхоза Чувашии в с. Моргауши объявляет новый набор на курсы подготовки **ВОДИТЕЛЕЙ КАТЕГОРИИ «В», ТРАКТОРИСТОВ-МАШИНИСТОВ.**
Новые формы, гибкий график обучения.
Тел. для справок: 8-905-345-35-77, 8-927-995-94-74. 2-3.

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 7-10.

Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 30-77.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Тел.: 8-927-667-40-92.** 30-50.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА. Тел.: 8-905-028-22-25. 16-19.

**ОКНА. ДВЕРИ. ПОТОЛКИ. Тел.: 8-962-599-65-62.** 11-14.

Продаю сено в рулонах (разнотравие) 350 кг, первый укос по 800 руб.; солому в рулонах 250 кг по 300 руб.; солому в тюках по 40 руб.; зерно 7 руб. за 1 кг.; мелкий картофель. Возможна доставка. Тел.: 8-905-199-92-46. 7-10.

* * *

Отделка домов сайдингом, монтаж кровли. Поможем подобрать металлочерепицу, профлист, металлический сайдинг по низким ценам.
Тел.: 8-961-345-78-02. 4-5.

* * *

ЭКОВАТА. Утепление стен, полов, каркасных домов, мансард. Быстро, качественно, недорого.
Тел.: 8-961-345-78-02. 3-10.

* * *

Продаю ячмень. Возможна доставка.
Тел.: 8-927-669-42-53. 1-5.

* * *

Продается производственная база. Земельный участок 30 сот., 4 здания, все коммуникации. Асфальт до базы. Местонахождение – с. Б. Сундырь. Вопросы по тел.: 8-917-651-98-16. 1-2.

* * *

Продаю сено, солому в тюках и рулонах; пшеницу, ячмень, овес, мелкий картофель. Есть доставка. Тел.: 8-927-858-62-86.

* * *

Февраль уйăхĕнче тăххăрмĕш пăруламалли сĕтлĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-015-34-48.

* * *

Сакăр уйăхри качака путекĕ сутатăп. Мулкачкасси ялĕ. Тел.: 8-927-856-97-05.

* * *

Февральте пĕрремĕш пăруламалли шурă-хура тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-987-678-94-36.

* * *

Пĕрре пăрулнă икĕ ĕне сутатпăр.
Тел.: 8-906-385-83-26.

Муркашри «Путене» ача сачĕн коллективĕ кунта нумай çул воспитателе пулăшакансĕнче ĕçленĕ А.Р. Митрофанован мăшăрĕ
**Георгий Николаевич МИТРОФАНОВ**
вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта кондитерта ĕçлекен Р.И. Волкована тата Лантăш пекарнинче котельнăй операторĕнче ĕçлекен А.И. Налимовăн тăван аппăшĕ
**Валентина Ивановна ШУЙЦЕВА**
йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чунтан-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ шкул директорĕн Ю.А. Герасимовăн çывăх тăванĕ
**Людмила Александровна НИКОЛАЕВА**
нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Виктор Леонтьевич ЯКИМОВ**
пенсионер, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

### Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| День недели | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | | Воскресенье | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | +5 | +5 | +9 | +8 | +8 | +6 | +8 | +4 | +4 | +4 | +5 | 0 | -2 | -1 | +2 | -3 | -2 | -1 | +1 | -2 |
| Давление, мм рт. ст. | 741 | 740 | 736 | 735 | 736 | 738 | 741 | 743 | 744 | 745 | 746 | 747 | 747 | 748 | 748 | 748 | 747 | 747 | 747 | 747 |
| Ветер: скорость, м/с | 5 | 6 | 6 | 6 | 8 | 9 | 7 | 6 | 6 | 5 | 4 | 3 | 2 | 2 | 4 | 3 | 4 | 5 | 5 | 4 |
| направление | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | З | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | З | З | З | З | З |
| Влажность, % | 84 | 87 | 83 | 87 | 84 | 71 | 60 | 78 | 83 | 89 | 69 | 78 | 88 | 82 | 56 | 76 | 83 | 66 | 67 | 86 |
| Солнце: восход заход | | 06:31 | 16:44 | | | 06:33 | 16:41 | | | 06:35 | 16:39 | | | 06:37 | 16:37 | | | 06:40 | 16:34 | |
| Луна: восход заход | | 04:19 | 16:46 | | | 05:33 | 17:05 | | | 06:46 | 17:24 | | | 07:57 | 17:45 | | | 09:06 | 18:10 | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р – реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Н.Н. Николаева.
Пичете панă 17.10.2017 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4580.

Номер набран и сверстан в АУ Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.